**Хусанта, Державин палăкĕ умĕнче**

«Пĕлес килни,– тенĕ Карамзин,– вĕреннĕ çыннăн та, хутла пĕлменнин те пур. Олимп çинчи чаплă вăййăсенче Геродот авалхи халапсене вулама тытăнсан халăх шавлама чарăннă та сас кăлармасăр тимленĕ. Сас паллисемпе уса курма пĕлмесен те халăхсем ĕç тăрăма пĕлме хавас: ватти çамрăк кине çӳллĕ вил тăпри çине кăтартать те унта выртакан çын ĕçĕсем çинчен каласа парать».

Чăвашсем те, ку таранччен чи тĕттĕммисен шутĕнчи ют йăхсем, çавăн пекех пĕеслĕхлĕ, вĕсем те ырă япалана вĕреннĕ çынсенчен кая мар хаклама пултараççĕ, çĕкленӳллĕ ăнлавсем те вĕсене ют мар. Çавна çирĕплетсе парать те ĕнтĕ манăн калавăм .

...Иртнĕ çулсенчен пĕринче эпĕ виçĕ чăвашпа – пĕр ватăпа тата икĕ каччăпа – Хусанта пултăм. Вĕсем Хусана пĕрремĕш хут килнĕ те мана хула кăтартма ыйтаççĕ: «Эпир пĕччен тупас çук йĕçта мĕскерле мыскарасем пуррине, кăтартăр». Вĕсем ыйтсан эпĕ хаваспах килĕшрĕм, вара каларăм : чăн пирваях каяс кирлĕ кĕпĕрскине, урăхла каласан – крепоçе. Чăвашсем Хусан крепоçне «кĕпĕрски» теççĕ, ахăртнех, ĕлĕк кĕпĕрне çар вăйпучĕн кĕнччелерĕ унта пулнăран – çавăнта авал вĕсен тăлмачĕсем тăнă.

Çапла вара эпир тăватсăмăр (вăл шутра ватă карт та) кĕпĕрскине кайрăмăр. Унта эпĕ вĕсене тахçанах шăратса кăларнă чиркӳ чанне (вăл ун чухне çĕр çинче уйрам картишĕнче ларатчĕ) , çĕнĕрен туса лартнă кермене, Çулăмпике пашнине, Архиерей хĕресĕн чиркĕвне тата Кремльти ытти тĕлĕнтермĕш сене кăтартса çаврăнтăм. Унтан та ытларах соборта тата Спас мăнастирĕнче каçхи кĕлĕре пултăмăр. Чăвашсем эпĕ кăтартнисене питех те кăсăкланса, чунран хисеплесе пăхрĕç. Юлашкинчен эпĕ вĕсене каларăм: «Айтăр халь, юлташсем, манпала, эпĕ сире кăтартам пĕр тĕлĕнтермĕшрен тĕлĕнтермĕш мыскара!».

Кĕпĕрскинчен вăрахлатмасăр тухрăмăр та Вырсарни урамĕпе чун тахçанах туртнă çĕре васкарăмăр. Акă эпĕ вĕсене университетăн сарлака картишне, «Турă» тата «Фелица» одăсем çырнă Гавриил Романович Державин палăкĕ умне илсе тухрăм.

Ку самантра тухăçран лăпкă çил вĕретчĕ, вăл сăвăçăн çĕкленсе тăракан сылтăм аллине сĕртĕнсе темле вăрттăн сасăсем кăларатчĕ. Державин çӳлти тӳпене чĕнсе калать темелле:

Эс, çутă паракан тĕнче,
Пĕр сăмахпа пурне те тунă.
Çĕнĕ вăй-хал ытамĕнче
Эс пулнă, пур, татах та пулăп!

Манăн юлташсем тĕлĕннипе хытса кайрĕç, мĕн каламаллине те пĕлмеççĕ. Вара эпĕ тĕлĕнсе пăхса тăракансене палăк çине алăпа кăтартса çапла ыйтрăм: «Чухлатăр-и эсĕр, кам

çакă?». Ватăраххи вĕрентӳçĕ сассипе хуравларĕ: «Ку Иван Васильевич патшапа пĕрле Хусана илнĕ паттăр, ун пек икĕ паттăра эпĕ Мускавра та курнăччĕ». Державина паттăр вырăнне хуракан карт ĕлĕк кирасир пулнă, Элексантăр патша ялавĕ айĕнче çапăçусене кĕрсе кăвакарнă вăл.

Манăн ăна тӳрлетмеллех пулчĕ: «Çук çав, ватă çыннăм, эсĕ ку аслă çынна палласа илеймерĕн; вăл чăнах та паттăр çын, анчах вăрçăри ĕçсемпе кăна мар, аслă ăс-тăн çирĕплĕхĕпе те: вăл паттăр сăмахсемпе курайманлăха, тарăхăва пĕтернĕ, тĕрĕслĕхе хутĕленĕ, ырă тăвакана, тăван çĕр-шыва, турăпа патшана юратнă»,— терĕм. Вара эпĕ вĕсене Державин пурнăçне йăлтах каласа патăм, вăл иккĕмĕш Кĕтерне патша вăхăтĕнче çар хĕсметĕнче тăнине те асăнтăм. Малтан чухăн пулнă, анчах пурне те вĕреннĕ, юлашкинчен унăн çивĕч ăсне патшасем пĕлсен тӳре туса хунă, вилсен вара пирĕн патша унăн çĕр-шыв умĕнчи ĕçĕсепе хисеплесе çак палăка лартма хушнă. Хусан вăл Державинăн тăван хули-çке-ха.

Манăн сăмахсем çамрăк чăваш юлташсен чунĕсене хытах хускатрĕç. Çакăн пек ăсчах та тава тивĕçлĕ çынна кăтартнăшăн вĕсем мана тав турĕç. Университет картишĕнчен кайма тапрансан вĕсенчен çамрăкки палăкпа уйрăлнă чухне макăрса ячĕ те çапла каларĕ: «Сывă пул, пирĕн Хусанти аслă çын! Эпĕ сана ĕнтĕ курраймăп!» Вăл чăнах та ăна урăх курраймĕ, мĕншĕн тесен унăн тăван çĕрĕпе уйрăлса аслă вырăс патшин çарне хĕсмете тухса каймаллаччĕ.

Халĕ майăн çулташ чăвашсем пурăнакан ялта Державин ятне тăтăшах асăнаççĕ, çапла вара Фелица юрăçин сăвăллă сăмахĕсем тӳрре тухрĕç:

Ман çннчен хыпар кайĕ Шурринчен Хура тинĕс таран,
Атăл, Дон, Невапа Урал сăрчĕ Рифея...
Шучĕ çук халăхсем хисеплейĕç ятран,
Ним çукран вĕсене паллă пултăм вĕт эпĕ...

*Михайлов-Янтуш, С. Хусанта, Державин палăкĕ умĕнче / С. Михайлов-Янтуш // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1993. – I пай. – С. 272-274.*